# «Наци чĕлхине вĕренесси – пĕр-пĕрне ăнланни»

Тĕнчере тĕрлĕ халăх. Кашни халăхăн хăйĕн кун – çулĕ, шăпи, хăйĕн йăли – йĕрки. Кусемсĕр пуçне, халăхсене чĕлхе те – вăл çынсене пĕрлештерекен пысăк майсенчен пĕри пулин те – хальлĕхе уйăрса тăрать-ха. Хăш чухне пĕлсе тăнă çертех шухăша каятăн: Çер – пысăках мар планета тетĕн, анчах мĕншĕн – ха ун çинче пурăнакан халăхсем, çынсем хушшинче тем тĕрлĕ уйрăмлăх?

Çав уйрăмлăхсем, паллах, çынсем ăçта пурăннинчен - çут çанталăкпа тавралăхран – этемлĕх аталанăвĕнчен тата ытти нумай - нумай сăлтавран килне.

Халăхсем, çынсем хушшинче пĕрлĕх çук-им?

Вăл та уйрăмлăхсем чухлех нумай. Этемĕн икĕ алă, ик ура, пĕр пек пит-куç, пĕр пек ӳт-пӳ, çӳç-пуç (тĕсе шута илмесен), унăн ăсĕ-халĕ пур – вал шухăшлать, чĕлхи пур – пĕр-пĕринпе калаçать.

Этем – чи телейлĕ чĕрĕ чун. Çанталăк ăна ăс-тăн панă. Çын хăйĕн ăсĕ-вăйĕпе ĕçлеме тытăнсанах - ан тив, унăн ăс-халĕ хальхипе танлаштарсан темиçе çĕр хут пĕчĕк, айван пулнă пултăр - лайăхран лайăхрах пурăнма яланах ĕмĕтленнĕ.

Пирĕн ялпа юнашар тутар ялĕсем вырнаçнă. Ĕлĕкех, асаттесем каласа панă тăрăх, чăвашсемпе тутарсем яланах хирĕçнĕ. Ял историне тĕпчекенсем тутарсенчен тарсах пирĕн ял çыннисем Кĕтне хĕрринчен çӳлерех килсе вырнаçнă тесе çирĕплетеççе. Вăхăт иртсе пырать, самана улшăнать.

1960-мĕш çулсенче Хăвăлçырмари 8 çул вĕренмелли шкулта директор пулса Олимпий Алексеевич Сазонов пулнă. Ăна кӳршĕ ялсен хушшинчи хирĕçӳ хытах шухăшлаттарнă. Чи малтан вăл Тутарстанри Кайпĕч районне кĕрекен Чутей ялĕнчи шкула кайса килнĕ. Хире-хирĕç ларса тутарпа чей ĕçсе чылай вăхăт калаçнă икĕ директор. Чăвашла та кăштах пĕлнĕ иккен тутар шкулĕн директорĕ Нигматзян Алиев. Олимпий Сазонов та тутарла аванах пупленĕ.

1965-мĕш çулхине Кĕтне шывĕн хĕрринче икĕ шкул ачисен тĕл пулăвне иртнерт. Футболла, волейболла вылянă. Пĕрле тăрса чăвашла, тутарла, вырăсла юрăсем юрлама та манман. Савăнăçлă та интереслĕ иртнĕ Кĕтне хĕрринче уяв.

Каярахпа çак икĕ шкулăн уявне хутшăнма Комсомольски районĕнчи Ĕнел шкулĕ те хавас пулнă.

Кăçал та 44-мĕш хут Тутар Республикинчи Кайпĕч районĕнчи Чутейри, Чăваш енри Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнелти, Елчĕк районĕнчи Хăвăлçырмари шкулсенчи вĕренекенсем пĕрле пухăнса тĕл пулу иртертĕмĕр. Çу уйăхĕнче, çут çанталăк чечекленнĕ тапхăрта пуçтарăнатпăр эпир пĕрле.

Чи малтанах хаваслă линейкăна йăркеленсе тăратпăр. Чăваш тата Тутар Республикин гимнĕсем мăнаçлăн янăранă вăхăтра уяв ялавĕсем тӳпене хăпараççĕ. Тăванла шкул представителĕсене çăкăрпа тăвар тутанса пăхма сĕнеççĕ. Иртнĕ çул тĕрлĕрен ырă ĕçсем туни çинчен тутар ачисем те, чăваш ачисем те савăнса каласа параççĕ.

Чăнласах туслăх шывĕ тесе калама пулать Кĕтнене. Вăл виçĕ район территорийĕнче юхса иртет.

Эпĕ те çак тĕл пулура 5 çул пулса куртăм. Тутарсен йăли-йĕркипе тĕплĕнрех паллашрăм. Çыннăн пурнăçĕнче туслăх калама çук пысăк вырăн йышăнать. Ăс-хакăл енчен пуян, анлă тавра-курăмлă, туслăха хаклама пĕлекен пуласси ачаранах паллă. Çакна вĕрентеççĕ те пире пулса иртнĕ тĕл пулусем. Паллах, уяв саманчĕсем пирĕн чĕрере ĕмĕрлĕхех асра юлаççĕ. Хырай Ĕнелĕнче çуралса ӳснĕ Валерий Туркай тĕл пулу çинчен каласа пани те яланлăхах асра юлĕ:

«Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне пĕрремĕш хут Чутей тăрăхĕнче иртнерт тĕл пулăва илсе кайни асра юлнă. Чи малтан эпĕ хĕрлĕ пусмаран пилотка çĕлесе хатĕрлерĕм. Шурă кĕпе çуса якатрăм. Çакăн пек уяв чăн-чăн педагогика акцийĕ пуль тесе шутлатăп.

Мĕншĕн тесен вăл пире, ачасене, сăмахпа мар, ĕçпе çирĕплетнĕ. Эпир – чăваш тата тутар ачисем – икĕ халăх туслăхĕ мĕн тери пысăк пуянлăх пулнине хамăр куçпа курса, чун-чĕрепе туйса илме пултарнă. Çак туйăм, паллах, кашнин чĕринче те упранать. Паянхи кун манăн юлташсем хушшинче тутарсем йышлă: паллă поэтсем, спортсменсем, писательсем, депутатсем. Вĕсем манра  чи малтан çакна кураççĕ: эпĕ аслă тутар халăхне чунтан юрататăп, хисеплетĕп. Çак туйăма хĕмлентерме пуçлаканни шăпах эпир паллă тăвакан 44 çул каялла çуралнă тĕп пулу.»

Пуçтарăнакансемшĕн асра юлакан чи паллă самант вăл-туслăх кăвайтне чĕртни. Тутарĕ, чăвашĕ пĕрле тăрса юрă шăрантаратпăр, ташлатпăр.

Мĕнле хитре янăрать тутар юрри Кĕтне шывĕ çийĕн. Хăй енне чăваш ачисене те туртать вăл. Çак тĕл пулу хыççăн эпĕ тутар каналĕпе иртекен передачăсене те курма пуçларăм. Тутар халăхĕн йăли-йĕркипе тĕплĕнрех паллашас ĕмĕтпе çунатлантăм. Пуçтарăнакансемшĕн асра юлакан чи паллă самант вăл - туслăх кăвайтне чĕртни. Тутарĕ, чăвашĕ пĕрле тăрса юрă шăрантаратпăр, ташлатпăр.

Çак тĕл пулурах эпĕ хамăн валли тус-юлташ та тупрăм. Чулпан Исламовăпа, Шарипов Ильдарпа паянхи кун та çыхăну тытатпăр.

Мана тутар  йăла-йĕркине пĕлме тăрăшни чăваш чĕлхине тата та тарăнрах вĕренме хистет. Пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене аванах чухлакан пултăм эпĕ. Çак туслăх пирĕн нихăçан та ан çухалтăр. Тĕнчери пур халăх пĕрлешсе пĕр çемьери пек пурăнсан мĕнле лайăх пулмалла!

Хамăр тутар кӳршĕсемпе эпĕ кирек ăçта тĕл пулсан – Мускавра-и, Хусанта-и, салтакра-и – вĕсем маншăн яланах çывăхран çывăх тус пулĕç.

Ытти наци чĕлхине, йăли-йĕркине пĕлни мана пурнăçра, вĕренӳре пулăшса пырасса шанатăп. Нихăçан та ан сӳнтĕр туслăх! Ялкăштăр икĕ республика ялавĕ туслăх уявĕнче!

*Ĕсе Хăвăлсырмари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан*
*тĕп шкулта 9-мĕш класра вĕренекен*
*Дмитриев Сергей хатĕрленĕ*

*Ертӳси: чăваш чĕлхипе*
*литературине вĕрентекен Михеева З.А.*